# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

72 (7389) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи августăн (çурла) 30-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Сентябрĕн 1-мĕшĕнче – Пĕлӳ кунĕ

**Хисеплĕ вĕренекенсем, вĕрентекенсем, шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче вăй хуракансем, педагогика ĕçĕн ветеранĕсем, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем!**

Сентябрĕн 1-мĕшĕ – чи илемлĕ те кĕтнĕ уяв. Çак кун ачасем çĕнĕрен пĕлӳ тĕнчине çула тухаççĕ. Вĕсем, тарăн пĕлӳ илсе, хăйсен пурнăç çулне тĕрĕс суйласа илесси вара сирĕнтен нумай килет. Ачасем культурăллă, анлă тавракурăмлă, пурнăç кăларса тăратакан йывăрлăхсене çĕнтерме пултарччăр тесе, хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Вĕсене мĕн пĕчĕкренех ватăсене хисеплеме, Тăван çĕршыва юратма, туслăхпа юратăва упрама хăнăхтаратăр. Мĕн чухлĕ чун ăшши, вĕçĕ-хĕррисĕр чăтăмлăх кирлĕ çакна валли. Тавах сире çакăншăн.

Эсир çĕнĕ вĕренӳ çулне çĕнĕ ĕмĕт-тĕллевсемпе пуçлама хатĕрри мана савăнтарать. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçри çĕнĕлĕхсене те тулли кăмăлпа пурнăçа кĕртетĕр. Паян ачасене тарăн пĕлӳ илме шкулсенче пур майсем те пур. "Вĕрентӳ" приоритетлă наци проекчĕ çакна валли çула татах та уçрĕ. Сире татах та хавхаланса ĕçлеме, ачасене татах та тăрăшса вĕренме условисем туса парать вăл. Сирĕн тăрăшуллă та пархатарлă ĕçĕрпе пирĕн район, республика, çĕршыв пуласлăхĕ тачă çыхăннă. Пур çĕрте те эсир вĕрентнĕ ачасем вăй хураççĕ. Паянхи çитĕнекен ăру та тарăн пĕлӳ илнипе пĕрлех шкулта чуханех хăйĕн пуласлăхĕшĕн яваплăха туйса ӳсессе шанас килет. Ĕмĕтленнине пурнăçа кĕртме ачасен кăмăл çирĕплĕхĕ те çиттĕр.

Сире пурне те çывхарса килекен Пĕлӳ кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Çăмăл мар, анчах пархатарлă ĕçĕрте ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тума ырлăх-сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатăп. Ыр кăмăлпа ăшпиллĕх вĕçĕ-хĕррисĕр пулччăр сирĕн. Çемйĕрсенче килĕшӳпе тату пурнăç хуçаланччăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**



***Сăн ӳкерчĕкре эсир Турай шкулĕн технологи учительне Альбина Юрьевна Герасимована куратăр. Хăйĕн ĕçне ответлăха туйса пурнăçлать вăл, ĕçре çĕнĕлĕхсемпе, малти опытпа усă курать. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл РФ Президенчĕн 100 пин тенкĕлĕх парнине тивĕçнĕ.***

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Ĕç çи – 2006

**Районти хуçалăхсенче тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене пухса кĕртес, кĕр аки валли çĕр хатĕрлес ĕçсем августăн 29-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартни**

***Цифрăсен колонкисенче: 1. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем çулнă тата вырнă. 2. Улăм пухса тирпейленĕ (процентпа). 3. Кашни гектар пуçне тивĕçекен тухăç (центнерпа). 4. Кĕрхи культурăсем акма çĕр хатĕрленĕ (процентпа). 5. Ĕнерхи кун хирте комбайнсем ĕçленĕ (штукпа).***

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 34 | 61 | 9 | 71 | 4 |
| "Волга" | 57 | 18 | 18 | 100 | 2 |
| "Восток» | 70 | 100 | 23 | 100 | 2 |
| «Герой" | 86 | 34 | 15 | 91 | 4 |
| ЗАО "Агро-Урожай" | 100 | 100 | 19 | 0 | |
| К. Иванов яч. хис. | 46 | 48 | 12 | 66 | 1 |
| Ильич яч. хис. | 63 | 70 | 21 | 86 | 5 |
| "Колос" | 17 | 0 | 13 | 60 | 2 |
| Ленин яч. хис. | 33 | 34 | 17 | 87 | 3 |
| "Лидер" | 30 | 32 | 19 | 36 | 5 |
| "Нива" | 85 | 68 | 15 | 15 | 4 |
| "Оринино" | 84 | 71 | 17 | 50 | 5 |
| "Передовик" | 60 | 6 | 11 | 94 | 2 |
| "Свобода" | 69 | 82 | 20 | 50 | 4 |
| "Сеятель" | 39 | 59 | 15 | 20 | 2 |
| Суворов яч. хис. | 60 | 33 | 19 | 76 | 6 |
| ООО АФ "Рассвет" | 66 | 43 | 16 | 123 | 4 |
| ОАО АФ "Нива" | 42 | 50 | 9 | 30 | 3 |
| "Ударник" | 60 | 56 | 25 | 92 | 9 |
| "Хлебороб" | 50 | 56 | 13 | 67 | 3 |
| Чапаев яч. хис. | 58 | 45 | 17 | 100 | 4 |
| «Чемеево» | 49 | 49 | 21 | 7 | 2 |
| Чкалов яч. хис. | 58 | 68 | 17 | 140 | 2 |
| **Районĕпе** | **54** | **51** | **17,3** | **75** | **83** |

Районти хуçалăхсенче вырма ĕçĕсем малалла пыраççĕ. Нӳрĕ çанталăк чăрмав кăларса тăратать пулин те,васкаварлисем уяр çанталăкăн кашни саманчĕпе туллин усă курма тăрăшаççĕ. Районĕпе тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 17442 гектар çинчен пухса кĕртмелле пулсан, ĕнерхи куна вырма ĕçĕсене 9472 гектар çинче туса ирттернĕ. «Колос», Ленин яч. хис., «Сеятель», Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсанче ĕç çи хăвăртлăхĕ тивĕçтермест.

Кĕрхи культурăсем акма 5050 гектар çĕр хатĕрлемелле пулсан, 3770 гектар хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ. Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра 17 гектар, «Волга» хуçалăхра 30 гектар, «Восток» хуçалăхра 15 гектар, Ильич яч. хис. хуçалăхра 70 гектар, Ленин яч. хис. хуçалăхра 80 гектар, «Свобода» хуçалăхра 28 гектар, «Рассвет» агрофирмăра 10 гектар, Чкалов яч. хис. хуçалăхра 140 гектар кĕрхи культурăсем акнă.

Районĕпе пĕтĕмпе 688 гектар çĕртме сухи тунă. «Восток», «Свобода» хуçалăхсенче, «Рассвет» агрофирмăра ку ĕçе аван йĕркеленĕ.

«Герой» хуçалăхра 8 гектар çĕр улми кăларнă.

## Кашни яла – асфальт çул

# Тирпейсĕр урамлă ялсене çул туса памаççĕ

"Чăваш Республикин автомобиль çулĕсене тăвассине хăвăрт вĕçлес енĕпе пурнăçламалли ĕçсем" Указа Н. Федоров Президент алă пуснăранпа эрне кăна иртрĕ. Çак документа пурнăçласа Министрсен Кабинечĕ тĕллевлĕ икĕ проект йышăнма тата республика бюджетне кĕртмелли улшăнусене ырлама ĕлкĕрчĕ. Ĕнер ЧР Патшалăх Канашĕ çак ыйтăва пăхса тухрĕ. Депутатсем кăçал çул тума тата 229 миллион тенкĕ уйăрчĕç.

Паян республикăри 486 ялта хытă сийлĕ çулсем çук. Указпа килĕшӳллĕн çитес 2 çулта 1100 километр автомобиль çулĕ тумалла. Ку тĕллевпе 9 миллиард тенкĕ укçа-тенкĕ уйăрмалла.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тунти кунхи канашлура çулсем тăвассипе малашне уйрăмах çине тăрса ĕçлемеллине палăртрĕ.

Паян районти 39 яла асфальт çулсемпе çыхăнтарман. 18 ял валли проектпа смета докуменчĕсене те хатĕрлемен. Çак ĕçсене хăвăртлатмалла. Çул-йĕр тăвакансене палăртма тендор ирттермелле.

ЧР Президенчĕ çул тăвас ыйтупа иртнĕ эрнере ирттернĕ канашлура çак самантa уйрăммăн палăртнă: пахалăх çине пысăк тимлĕх уйăрмалла, çулсене ĕмĕрлĕхе тумалла.

Асфальт çулсем тума тăпра хăпартассине çитес вăхăтрах пуçламалла. Хĕл касат ĕçсене пурнăçлăр. Çавна май тыр-пула пухса кĕртнĕ хыççăн пушанакан автомобильсемпе тракторсене унта ямалла, ĕçе пĕтĕм ял –йыша явăçтармалла. Хуласемпе ялсен тата хăй тытăмлăх пуçлăхĕсене асăрхаттаратăп: Минстрой



çипе пусăрăнсан, малаллахи ĕçсене тумалла. Çул тăвакансен ĕçне икĕ сменăпа йĕркелемелле.

Тепĕр пĕлтерĕшлĕ самантa та уйрăммăн палăртар. "Строительствăна халех хатĕрленме пуçлăр: çӳп-çапа тасатăр, дамбăсене çĕклĕр, ялсем патне пымалли вырăнсенче тата ялсенче анпредставителĕсем пырса урамсенче тĕрлĕ ăпăр-тапăр куписене, тĕрлĕ материала тирпейсĕр купаласа хунине асăрхасан сирĕн ялсем патне пыракан çулсен строительствине сахалтан та 2008 çул вĕçне куçаратпăр", - терĕ Н.В. Федоров иртнĕ канашлура.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен те, ял çыннисен те паян хытах шухăшламаллла. Шухăшлама, тĕрĕсрех каласан, вăхăт çук. Çанă тавăрса ĕçе тытăнмалла. Урамри чулкирпĕч, вутă-шанкă, хăмапĕрене куписене ĕçе ямалла, пуçтарса кĕртмелле. Тирпейсĕр ялсене паян автомобиль çулĕсем туса памаççĕ.

Илер, акă, пĕр вĕрентӳллĕ тĕслĕхе. Мăн Шашкар ялĕнче паян çул тума тăпра хăпартаççĕ. Экскаватор уйрăм çын хуçалăхĕ тĕлне çитсен чарăнса ларнă. Лешĕ урамра темĕнле тутăх кабина упрать иккен...

ЧР Президенчĕн Указне пурнăçласа кăçалах 700 миллион тенкĕ çул-йĕр тума хываççĕ. Тата 100 километр çул хута яраççĕ.

Ĕнер районти ялсене çул тăвас ыйтăва ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен, строительство организацийĕсен тата проектсем хатĕрлекен учрежденисен ертӳçисен пĕрлехи канашлăвĕнче сӳтсе явнă. Тĕплĕнрех кун пирки çитес номерте пĕлтеретпĕр.

**Т. ИВАНОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: кун пек тирпейсĕр урамлă яла автомобиль çулĕ килесси иккĕленӳллĕ.**

## Октябрĕн 8-мĕшĕнче – ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

# Суйлава 7 кандидат хутшăнать

ЧР тăваттăмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн депутатне пĕр мандатлă суйлав округĕпе суйлассипе ĕçлекен 8 № Муркаш суйлав округĕн суйлав комиссийĕ (кунта Элĕк районĕ те кĕрет) çак округпа депутата суйлама 7 кандидат регистрациленĕ:

**ДАНИЛОВ Владислав Григорьевич,** 1953 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Муркашри районти тĕп больницăра тĕп врач пулса ĕçлет. Ăна кандидата "Единая Россия" политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ тăратнă. 2006 çулхи августăн 14-мĕшĕнче регистрациленĕ.

**АНИСИМОВ Владимир Ильич,** 1949 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче çуралнă. Вăхăтлăха ĕçлемест. Ăна кандидата РФ Коммунистсен партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ тăратнă. 2006 çулхи августăн 18-мĕшĕнче регистрациленĕ.

**ДАВЫДОВ Александр Платонович,** 1973 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче çуралнă. Чикĕллĕ яваплăхлă "Моргаушрайбыт" общество директорĕнче ĕçлет. Хăйне хăй кандидата тăратнă. 2006 çулхи августăн 24-мĕшĕнче регистрациленĕ.

**ФИРСОВ Владимир Петрович,** 1953 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнче çуралнă. Чикĕллĕ яваплăхлă "Дар-инструмент" обществăра директор заместителĕнче ĕçлет. Ăна кандидата "Патриоты Росссии" политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ тăратнă. 2006 çулхи августăн 25-мĕшĕнче регистрациленĕ.

**АНДРЕЕВ Евгений Николаевич,** 1977 çулхи февралĕн 13-мĕшĕнче çуралнă. Чикĕллĕ яваплăхлă "Электростроймонтажхолдинг" обществăра генеральнăй директорта ĕçлет. Хăйне хăй кандидата тăратнă. 2006 çулхи августăн 25-мĕшĕнче регистрациленĕ.

**СЕРГЕЕВ Валерий Николаевич,** 1958 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕнче çуралнă. "Аликово-молоко" предприяти председателĕнче ĕçлет. Хăйне хăй кандидата тăратнă. 2006 çулхи августăн 25-мĕшĕнче регистрациленĕ.

**ГОРДЕЕВ Владимир Алексеевич,** 1953 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнче çуралнă. Элĕк районĕнчи ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ. Ăна кандидата Раççейри либераллă демократи партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ тăратнă. 2006 çулхи августăн 25-мĕшĕнче регистрациленĕ.

**Асăрхаттарни: кандидатсене регистрациленĕ йĕркепе пичетлетпĕр.**

# Кĕрешĕве 5 парти тухать

Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕнче тунти кун иртнĕ пресс-конференцире унăн председателĕ Людмила Линик çапларах çĕнĕ хыпарсем пĕлтернĕ.

Иртнĕ эрнере Тĕп суйлав комиссийĕ политика партийĕсен регионти уйрăмĕсен парти списокĕпе регистрацилеме тăратнă кандидатсен докуменчĕсене тĕрĕслесе пĕтернĕ.

"Раççей патриочĕсем" политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕ тĕрĕслеме суйлавçăсен 10654 алă пуснине тăратнă. Саккунпа килĕшӳллĕн вĕсенчен 1938 алă пуснине тĕрĕсленĕ. Çав шутран 34 алă пуснине (1,75 процент) пăрахăçланă пулин те ку саккунпа килĕшсе тăрать. Çапла майпа Тĕп суйлав комиссийĕ **"Раççей патриочĕсем"** политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕн Чăваш Республикин Патшалăх Канашне пĕрлĕхлĕ суйлав округĕпе суйланма тăратнă кандидатсен списокне регистрациленĕ.

Çавăн пекех **"ЛДПР"** политика партийĕн регионти уйрăмĕ тăратнă документсем те кăлтăксăр пулнă, вĕсен кандидачĕсен списокне те регистрациленĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн **"Тăван çĕршыв"** тата "Раççейри пенсионерсен патрийĕ" политика партийĕсен Чăваш Республикинчи уйрăмĕсем суйлав салукĕ хывнă. Енчен те "Тăван çĕршыв" партин кандидачĕсен списокне регистрациленĕ пулсан, "Раççейри пенсионерсен патрийĕ" кандидачĕсен списокне регистрацилессине Тĕп суйлав комиссийĕ хирĕçленĕ, мĕншĕн тесен вĕсем саккунăн 35 статйин 11 пайĕн 11 пунктне пăхăнман – суйлав салукне юридици сăпачĕ хывма пултаракан укçа-тенкĕ палăртнă шайран пысăкрах пулнă. Çапах та "пенсионерсем" хăйсен шанăçне тĕпĕ-йĕрĕпе çухатман. Халĕ кăткăс çак ыйтăва вĕсен çывăх вăхăтра судра татса пама тивет.

Маларах вара Тĕп суйлав комиссийĕ **"Пĕрлĕхлĕ Раççей"** тата **Раççей Федерацийĕн коммунистсен партийĕн** Чăваш Енри уйрăмĕсен кандидачĕсен списокне регистрациленĕччĕ.

Çапла майпа Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн суйлав марафонне 5 политика партийĕн регионти уйрăмĕ тухрĕ.

## Юбилей

### *Саламлатпăр*



Юратнă, кăмăллă, хаклăран та хаклă аннене, асаннене, йăмăка, аппана – Муркашра пурăнакан **Людмила Поликарповна ИВАНОВАНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.

Эпир сана чун-чĕререн хисеплетпĕр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

Тулли кĕрекепе, тулли телейпе, ыр тăвансемпе пĕрле ирттĕрех сан ĕмĕрӳ.

**Юратса саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕ, хĕрĕ, аппăшĕпе шăллĕсен çемйисем, тăхлачисем, тăванĕсем, тус-юлташĕсем.**